36-218
59
В-23
1960



# Ачасен йумаххисем

# АЧАСЕН ЙУМАХХИСЕМ


*ЙЎРККИ ИВАНĔ*
*пухнă*



ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТЕЛСТВИ
ШУПАШКАР ★ 1936

*КĔÇĔН ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЉЂИ*

Редактор С. Фомин
Техредактор Н. Янгас

★

Послано
в производ-
ство 25|IV—36 г.
Подписано к печати
9|V—36 г. Уполномоч.
Чувашлита № 1351. Чуваш-
гиз № 85. Заказ № 774.
Тираж 3000 экз.
Ф. б. 72×105/20.
Об'ем 0,5
п. лис.

★

Чебоксары, Канашская, 16.
Типогр. № 1 Чувашгиза.



## „Ăшлăх та пур, туллăх та пур“.

Пулă тийесе тавăрнакан ăстарик çул çинче вилнĕ тилĕ тупнă та çуни çине илсе хунă. Тилли чĕрĕ пулнă мĕн, вăл йурп вилнĕ пек пулса выртнă. Çак тилĕ çуна çинчи пулла пĕрерĕнех пăрахса пĕтернĕ те хăй те çуна çинчен анса йулнă.

Ăстарикĕ, çуна умĕнче утса пыраканскер, çавна кил хушшине кĕрсен те асăрхаман. Вăл тӳрех пӳрте карчăкĕ патне чупса кĕнĕ те:



— Ăшлăх та пур, туллăх та пур,—ĕçлĕкне кăмакана!—тенĕ.

Вара ĕçлĕкне кăмакана ненĕ.

Хăй çĕнĕ ĕçлĕк валӡи тупнă тилĕ патне кайаҭ. Пăхаҭ: тилĕ те çук, пулли те çук. Каллех пӳрте чупса кĕрет те:

— Çунса кари?—тесе карчăкĕнчен ыйтаҭ.

## „Вилли-чĕрри, ĕç патне!"

Пĕр йалта йулхав пулнă, тет. Çав йулхава пиччĕшĕсем ĕçлеме чĕннĕ, тет. Йулхав каларĕ, тет:

— Сирĕн ĕçе ĕçличчен çăва çине кайап та шăтăк чакаласа выртап,—терĕ, тет.

Тепĕр кун йулхав çăва çине карĕ, тет те, шăтăк чакаларĕ, тет. Пĕр кунта 3 вершук чакаларĕ, тет. Çав йулхав 19 кунта шăтăк чакаласа та хучĕ, тет. 20-мĕш кунĕнче йулхав хăй чакаланă шăтăка кĕрсе выртрĕ, тет.

Çĕрле пулсан аслă пиччĕшĕ чăпăркка илчĕ, тет те, çăва çине кайса ирчченех:

— Вилли-чĕрри, ĕç патне!—тесе çаплах чăпăрккине шартлаттарса çўрерĕ, тет. Ирхине киле кайса выртрĕ, тет. Çав йулхав чăпăркка шартлаттарнă чух хăраса выртрĕ, тет. Тул çутăлсан тăчĕ, тет те, киле вĕçтерчĕ, тет. Киле çитрĕ, тет те, калат, тет:

— Унта ырă мар, виллисене те ĕç патне хăвалаççĕ. Пĕрех хут сирĕнпех ĕçлеме кайам,— тесе калат, тет.

## Качака йумаххи.

Пĕр качака пурăнат. Унăн килĕ-çурчĕ пулман. Çак качака пĕр пўрт патне пырса тăрат те ыйтат:

— Хура пӳрт, хура пӳрт, хватTер йаратни?—тет.

— Йарасси пулас ҫук, йăтăнса анăп таҫта.

Кайат качака тепӗр пӳрт патне.

— Шур пӳрт, шур пӳрт, хваттер йаратни?—тет.

Шур пӳрчӗ:

— Йарас,—тет.

Качака шур пӳрте кӗрет те пурăнат. Пурăнсан-пурăнсан виҫӗ путек турӗ. Качакан халӗ сӗт пуҫтарма тухса каймала. Ку ачисене вӗрентсе хăварат:

— Енӗ ҫинҫе сасăпа калатăп, упа мучи мăн сасăпа калат, есӗр ăна ан кӳртӗр,—тет.

Ҫӳресен-ҫӳресен качака таврăнат, пӳрт алăкӗ патне пырса тăрса йурлат:

— Йенчӗк тулли сӗтӗм пур, майăр хуппи тулли ҫăвăм пур,—тет.

Ачасем ăна кӳртрӗҫ.

Качака ачисене ҫитерет те тухса кайат:

— Упа мучи мăн сасăпа калат, енӗ ҫинҫе сасăпа калатăп,—тесе вӗрентет.

Упа пынă та мăн сасăпа:

— Йенчӗк тулли сӗтӗм пур, майăр хуппи тулли ҫăвăм пур,—тесе йурланă.

Качака ачисем ăна кӳртмен. Качака йурланине итлеме упа пусма айне кӗрсе выртнă.

Качака таврӑнать те:

— Йенчӗк тулли сӗтӗм пур, мӑйӑр хуппи тулли ҫӑвӑм пур, уҫӑр, уҫӑр, ачасем!—тесе йурлать.

Ачисем амӑшне уҫса кӳртрӗҫ.

Качака хӑйӗн путеккисене ҫитерчӗ те:

— Есӗр упана ан кӳртӗр,—тесе тухса карӗ.

Упа чӗлхине хӑйраса выртать. Чӗлхине ҫӳхетрӗ те упа та алӑк умне пырса тӑчӗ.

— Уҫӑр, ачасем! Йенчӗк тулли сӗтӗм пур, мӑйӑр хуппи тулли ҫӑвӑм пур,—тесе ҫиҫе сасӑпа йурлать.

Ачисем пытаннӑ: пӗри кӑмака айне, тепӗри вучаха, тата тепӗри тиркӗ айне. Упа йурланине илтсен, кӑмака айӗнчи тухнӑ та алӑка уҫнӑ. Упа ӑна тӳрех ҫисе йанӑ. Кайран вучахрине туртса кӑларнӑ та ҫисе йанӑ. Тиркӗ айӗнчине упа тупайман. Упа тухса кайсан, тиркӗ айӗнчи тухнӑ та алӑка ҫаклатса лартнӑ.

Халӗ ӗнтӗ качака таврӑнать те:

— Уҫӑр, уҫӑр, ачасем! Йенчӗк тулли сӗтӗм пур, мӑйӑр хуппи тулли ҫӑвӑм пур,—тесе йурлать.

Ачи уҫса кӳртет.

Качака:

— Ачасем ӑҫта?—тет.

— Упа килсе çисе тухса карĕ,—тет путекки.

Качака:

— Атта, упана шырама кайăпăр!—тет.

Карĕç кусем, шыраса çӳреççĕ. Упа вăрман хĕрринче выртать. Качака упа патне çитрĕ те:

— Атта, тĕкĕшĕпĕр, есĕ аната тăр, епĕ тăва тăрам!—терĕ.

Качака туран чупса анчĕ те упана тĕкрĕ йачĕ; упа хырăмĕ çурăлсах карĕ; икĕ качака путекки тухрĕç тăчĕç.

Качака путеккисене йертрĕ те килеле килет.

## Ула тынашки.

Пĕр çыннăн пăрушĕ çухалнă. Вăл аслă хĕрачине шырама йарать. Лешĕ вăрмана кĕнĕ те хура пăрува курса:

— Ула тынашки, тируки!—тенĕ.

Ку упа пулнă мĕн. Упа ачана тытать те шăтăкне тӳрех илсе кайать.

Ача йурлать:

— Çаппа пытăм, çапăнтăм; пĕкке пытăм, пĕкĕрлтĕм,—тет.

Тепĕринче пăру шырама вăталăх хĕрне йараççĕ. Ку вăрман хĕрне пырать те:

— Ула тынашки, тируки!—тет.

Вăрмантан упа тухаť те куна та йăтса кайаť хăй шăтăкне. Икĕ хĕр çухалчĕ ĕнтĕ.

Тата кайаť кĕçĕнни тына шырама. Вăрман патне çитет те:



— Ула тынашки, тпруки!—тет.

Упа сиксе тухаť те куна та хăй шăтăкне йăтса кайаť. Ку йурлаť:

— Çапна пытăм, çапăнтăм; пĕкке пытăм, пĕкĕрлтĕм, аки карĕ—çухалчĕ, пăру кунтах çўрет мĕн,—тет.

Нулашкинчен пăру пырама амăшĕ кайат.

— Ачасем карĕç, çухалчĕç, хам кайам,— тет. Вăрман хĕрне çитет те:—Ула тынашки, тпру-ки!—тет.

Упа сиксе тухат те амăшне те тытса кайат хăй шăтăкне.

Упанăн сăра ĕçме каймала, тет. Купăстасем, хăйарсем, уйрансем хатĕрленĕ, тет. Карĕ, тет, упа пĕтĕм ертеллипе хăйĕн куккăшĕ патне. Куккăшĕ кĕсел лартса панă. Упа чашкă хĕррипчен тытрĕ те вĕри кĕселе тăкса йачĕ, тет, хăй çине. Вара хăй пиçсе карĕ, тет.

Упа тирĕнчен кĕрĕк çĕлетрĕç, тет.

## Чăхăпа услам çу.

Чăхăпа услам çу пурăнаççĕ, тет.

Çаксен вутă пĕтнĕ. Чăхă вăрмана вутă патне карĕ. Услам çу апат пĕçерме йулчĕ. Чăхă вутă тийесе тавăрăннă çĕре услам çу апат пĕçерсе хатĕрленĕ. Апачĕ вĕресен услам çу чăмпăлт! сиксе тухрĕ апат ăшне. Апат тутлансах карĕ.

Чăхă тавăрăнчĕ те:

— Услам çу, тух вутă пушатма!—тесе кăшкăрат.

Услам çу тухрĕ, çаксем пушатрĕç те пӳрте кĕрсе апат çиме ларчĕç.

— Мĕнле санăн апат тутлă пулнă?—тет чăхă.

— Апат вĕресен епĕ апат ăшне чăмпăлт сиксе тухрăм, çанпа тутлă пулнă пулĕ,—тет.

Пурăнсан-пурăнсан çаксен вутă каллех пĕтнĕ. Услам çу вутă патне кайнă, чăххи апат пĕçерме йулнă. Апат вĕресен чăхă шăмпăлт! сикрĕ апат ăшне; çунаттисемпе лас-лас турĕ те пиçсе те карĕ.

Услам çу вутă тийесе çитрĕ вăрмантан.

— Чăхă, тух вутă пушатма!—тет.

Тухакан пулмарĕ. Услам çу вутă пушатрĕ те пӳрте кĕчĕ. Кăмакаран апат кăларма тăрат те апат ăшĕнче чăхă йарăнса çӳре парат. Чăхха апат ăшĕнчен кăларчĕ те тислĕк купи айне кайса пытарчĕ; хăй йулташ шырама карĕ, тет.

Хакĕ 30 пус
Цена 30 коп.

# ДЕТСКИЕ СКАЗКИ

На чувашском языке

ЧУВАШИЗДАТ ★ 1936